28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 6 ШАМАТКУН 194(6945) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХĔРЛĔ ÇАРТАН ТАВРАННИСЕНЕ ĔÇЕ ВЫРНАÇТАРАССИ ТАТА ПУЛĂШУ ПĂРАССИ

Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçса ирсĕр тăшмансене—Германи фашизмĕпе Япони агрессорне — çĕнтернĕ Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсем хăйсен тăван ялĕсемпе хулисене, мирлĕ ĕç тума, хăйсен çемьисене таврăнаççĕ.

Хĕрлĕ Çартан таврăнакансемшĕн тăрăшасси пирĕн çĕршывра государствăпа мĕнпур халăхăн питĕ паха ĕçĕ пулса тăчĕ. Пирĕн çĕршыври хуçалăхра социализм системи пуçпулса тăнине пула, халĕ Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан воин хăйĕн ыранхи кунĕшĕн пăшăрханмасть, ăна ĕççĕрлĕх хăратса тăмасть. Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воина государство хăй Хĕрлĕ Çара кайиччен пĕчĕккĕ мар ĕçе вырнаçтарать, материальнăй пысăк пулăшу парать, пурăнмалли çуртйĕрне юсаса йĕркелес, вутă тупса парас тĕлĕшпе çăмăллăхсем парать, хуçалăха йĕркелеме кивçен укçа парать. Хĕрлĕ Çартан киле таврăннă воина пирĕн: «Кай пирĕн патăмăртан, хăвăрăн пурнăçуна хăв пĕлнĕ пек йĕркеле, санăн пурнăçупа пирĕн ĕç çук», тесе никам та калама пултараймасть. Пирĕн партипе правительство вырăнти парти, совет, хуçалăх организацийĕсене Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ воинсемшĕн тимлĕн тăрăшма хушаççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ темиçе кун каярах Хĕрлĕ Çартан иккĕмĕш черетпе киле ярасси çинчен Указ пичетлесе кăларчĕ. Çак Указ тăрăх кăçал çартан тепĕр вунă çул хушшинчи çынсем таврăнмалла. Вĕсемсĕр пуçне тата аслă шкултан вĕренсе тухнисем, техническа тата ялхуçалăх вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнисем, Хĕрлĕ Çара кайиччен учитель е преподаватель пулса ĕçленĕ çынсем, аслă шкулăн иккĕмĕш курсĕнчен е аслăрах курссенчен пăрахса çара кайнисем пурте киле таврăнмалла. Хĕрлĕ Çар ретĕнче 7 çул ытларах пурăнакан, виçĕ хут е ытларах аманнă рядовойсемпе сержантсем киле таврăнмалла.

Совет правительстви Хĕрлĕ Çартан нумай çынсене киле яма йышăнни ĕнтĕ пирĕн государство мирлĕ строительство тапхăрне куçнине пĕлтерет. Çĕршыври хуçалăха юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пирĕн питĕ нумай. Пулас пилĕкçуллăх планне пурнăça кĕртме пире çав тери нумай рабочисемпе специалистсем кирлĕ. Хĕрлĕ Çартан таврăнакан çынсем ĕнтĕ пирĕн вăйлăн аталанакан халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Чи малтанах—Хĕрлĕ Çартан çынсене киле ярасси çинчен йышăннă Закона пĕр çăмăхсăрах тĕрĕс пурнăça кĕртсе пымалла. Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансене пурне те вĕсен пултарулăхне кура, вĕсем çарта илнĕ хăнăхусене шута илсе, тивĕçлĕ ĕç тупса памалла. Киле таврăнакан воинсене пурне те Законра кăтартнă çăмăллăхсемпе пуринпе те усă курмалла тăвас пулать.

Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансем çинчен калакан Закона тĕрĕс пурнăça кĕртсе пынин тĕслĕхĕсене нумай кăтартса пама пулать.

Шăхасан районĕнчи Тури Сурăмра П. Дмитриева—ял Совет Исполкомĕн председательне, В. Окунева—колхоз счетоводне, Н. Евграфова — учетчика, Н. Иванова—кладовщика, Ф. Егорова — ревизи комиссин председательне, М. Романова—машиноведа, Г. Фадеева—завхоза лартнă. Хĕрлĕ Çартан таврăнакансем хăйсен ĕлĕкхи, вăрçăччен юратакан ĕçĕнчех ĕçлеме тытăнчĕç. Акă, И. Александров—учительре, С. Игнатьев—трактористра, В. Васильев — военрукра, Т. Игнатьев—госстрах инспекторĕнче, С. Денисов — вăрман объездчикĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Шупашкар хулинче 162 çемьене 240 кубометр вутă турттарса панă, çуртйĕр юсама 19 çемьене 73 кубометр йывăç панă, 120 çынна электричество çути кĕртсе панă, 3.000 тенке яхăн укçа, 856 килограмм çăнăх, 500 метр матери, 100 мăшăр çăматă парса пулăшнă, 15 хваттер юсаса панă тата 5 çынна çĕнĕ хваттер панă.

Елчĕк районне ку таранччен 200 çынна яхăн таврăннă. Çĕнтерӳçĕ-воинсене нумай колхозсенче тырă, выльăх-чĕрлĕх, вутă, утă-улăм парса пулăшнă, колхозри ответлă ĕçсене лартнă «Красный Восток» колхозра Д. Красновпа Е. Чебоксарова пĕрер центнер тырă панă, «Октябрь» колхозра Н. Сырцова 50 килограмм тырă тата пĕр лав улăм панă, Ленин ячĕпе тăракан колхозра М. Чернова пӳрт юсама 2 центнер тырă панă. Районĕпе Хĕрлĕ Çартан таврăннă çынсене колхозсем пурĕ 14 центнер тырă, 12 центнер çăнăх, 12 сысна çури панă. Кунсăр пуçне гособеспечени енĕпе—6,6 центнер çăнăх, райсоюз енĕпе — 1,5 центнер тăвар, 0,5 центнер супăнь, 50 катăк пит супăнĕ, табак, пирус тата ытти тĕрлĕ таварсем панă, райпилан урлă 300 кубометр йывăç тата 60 кубометр вутă панă.

Анчах та çакăн пек ырă тĕслĕхсемпе пĕрлех, хăшпĕр çĕрте Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсемшĕн ытахальтен çеç тăрăшнă пек тĕслĕхсем те сахал мар. Акă, Хĕрлĕ Çартан таврăннă хăшпĕр çынсене Шупашкарти хула Совечĕ вутă çырса парать, анчах та вуттине шывран кăлармалла, е Атăл леш енчен турттарса килмелле, хула Совечĕ вара вутта шывран кăларма та пулăшасшăн мар, Атăл леш енчен турттарса килме те транспорт тупса памасть. Çав вăхăтрах Шупашкар хула совечĕ иккĕмĕш черетпе киле таврăнакансене йышăнас тĕлĕшпе нимĕн те тума тытăнман.

Муркаш районĕнче Хĕрлĕ Çартан таврăнакансене ĕçе вырнаçтарас ыйтăва райисполком ларăвĕнче пĕрре те сӳтсе явман. Çавăн пекех Хĕрлĕ Çартан таврăнакансене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе Куславкка районĕнче те япăх ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çартан киле таврăнаканнисенчен Улатăрта—10 процентне, Канашра—30 процентне çеç ĕç тупса пама пулăшнă.

Хĕрлĕ Çартан таврăнакансем çине çакăн пек чунсăр пăхнине текех чăтма çук. Хĕрлĕ Çартан таврăнакан çыншăн тăрăшасси вăл—ăна кĕтсе илнĕ май унпа пĕрле ларса ĕççе-çини çеç мар. Ăна чи малтанах хăй юратакан ĕçе вырнаçтармалла, ĕçре тăтăшах пулăшса пымалла. Колхозри, предприятисенчи ĕçпе йăла условийĕсене хăвăртрах хăнăхтарма пулăшмалла.

Предприятисенче, МТС-сенче, транспортра Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакансене тĕрлĕрен профессисене вĕрентме курссем организацилемелле. Вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçĕн предприятийĕсенче Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсем валли куллен кирлĕ япаласем, кĕпе-тумтир, урана тăхăнмаллисем ытларах туса кăларма тытăнмалла.

Партипе правительство, мĕнпур совет халăхĕ хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсемшĕн, вĕсен прависемпе интересĕсемшĕн кунран кун тăрăшаççĕ. СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш Сессийĕ Хĕрлĕ Çартан çынсене киле ярасси çинчен йышăннă Закон тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ йышăннă Указ совет государстви çыншăн сталинла тăрăшнине питĕ уçăмлăн кăтарса параççĕ. Кашни партипе совет организацийĕн çак Закона пур çĕрте те тĕрĕс пурнăça кĕртсе пырас пулать, Хĕрлĕ Çартан таврăнакан çынсем çине бюрократла чунсăр пăхассине тĕпренех пĕтермелле. Çакă ĕнтĕ вĕсен государствăпа парти умĕнчи таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Фронтовик производствăна ертсе пырать

Федор Алексеевич Терешков нумаях пумасть Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăнчĕ. Йывăр та вăрăм вăрçă çулне утса тухнă вăл. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçса, вăлултă хутчен аманнă. Правительство унăн паха ĕçĕсене пысăка хурса хакланă. Хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса çапăçнăшăн ăна 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе, «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа тата «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн», «Мускава хӳтĕленĕшĕн», «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн» медальсемпе наградăланă.

Шупашкара таврăнсан, унăн пĕр кун та ĕççĕр пурăнас килмен. «Халĕ пĕтĕм совет халăхĕ Тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерессишĕн, совет государствине аталантарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ чух, епле ĕççĕр ларан-ха?» тенĕ вăл хăйĕн юлташĕсене. Ăна часах вара хулари апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Терешков хăй умĕнчи ответлăха туйса, кĕске вăхăтрах комбинатра пысăк улшăнусем турĕ. Комбинат йĕри-тавра çĕнĕ карта тытнă, холодильник туса лартнă. Комбинат валли 320 кубометр вутă хатĕрленĕ. Хуçалăха хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Конфетсем тата премĕксем тăвакан пехсен çурчĕсене ăшăтса юсанă, çурт алăкĕсене те тачă хупăнакан тунă.

Терешков юлташ çав тери ĕçлеме юратакан çын иккенне комбинатра ĕçлекенсем часах пĕлсе çитнĕ. Вăл ĕçлеме тытăннă малтанхи кунсенчех производствăпа паллашса, унта пысăк çитменлĕхсем пуррине асăрханă. Ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулнă, оборудованисем çитмен; ĕçлекенсем хушшинчи ĕç дисциплини те кирлĕ вырăнта пулман. Вăл час-часах цехсенче çӳренĕ, унти опытлă работниксемпе каланă; комбинат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе производство канашлăвĕсем туса ирттернĕ. Производство ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе ăна 56 çулхи ватă мастер Григорий Николаевич Егоров нумай пулăшнă.

Терешков юлташ çакăн пек тăрăшса ĕçлени ахаль пулмарĕ. Комбинатри работниксем пĕр-пĕрине ăмăртса тухăçлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Комбинат сентябрь уйăхĕнчи производство планне 104.6 процента çити тултарчĕ. Сентябрь уйăхĕнче уйрăмах Вера Вдовина (конфетсем тăвакан пех) тата Анастасия Иняева (премĕксем тăвакан пех) бригадисем лайăх ĕçлерĕç. Вера Вдовина, Александра Гарянкина, Анастасия Иняева тата Александра Потатуева работницăсем иртнĕ уйăхра 4 çыншăн ĕçлесе пычĕç, уйăхри заданине кашниех 110—120-шер процент тултарчĕç.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Ӳкерчĕк çинче: Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **А. И. Васильев** юлташ. Колхоза лайăх ертсе пынăшăн ăна правительство «За трудовую доблесть» медальпе наградăланă. Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Паянхи кун тĕлне çак колхоз Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 250 пăт тырă панă.

ПУР ĔÇЕ ТЕ ВĂХĂТРА ТУМАЛЛА

КӲКЕÇ. Государствăна тырă парса татнă колхозсен шучĕ кулленех йышлăланса пырать. Паянхи кун тĕлне 30 колхоз ытла государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă. Вĕсен шутне Заводской ял Советĕнчи «Осоавиахим», «Аэросани», «Перелом», Ворошилов, Киров ячĕсемпе тăракан тата ытти колхозсем те кĕреççĕ. Шуркка ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Петрова юлташ) авăн çапса та пĕтерчĕ. Кунта халĕ çĕрулми кăларса ăна государствăна параççĕ.

Анчах та, районĕпе илсен, государствăна тырă парасси çителĕксĕр пырать. Иртнĕ çул районри колхозсем сентябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана тултарнăччĕ, кăçал вара октябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне те 72 процент кăна тултарнă. Государствăна тырă парас ĕç çителĕксĕр пынин сăлтавĕ—кунĕн-çĕрĕн авăн çапас ĕçе йĕркелеменни пулать. Уйрăмах Шурчакасси, Шăнкас, Котяково. Тарабакасси, Абаш ял Совечĕсенчи колхозсем ытла та юлса пыраççĕ. «Трудовик» колхозăн 20 гектар, «Урожай» колхозăн 10 гектар, «Пионер» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсен 15-шер гектар вырса пĕтермен тырă пур.

Районри колхозсен кăçал 7500 гектар сĕртме тумалла, паянхи куна плана 40 процент кăна тултарнă.

Г. ПЕТРОВ.

Ӳкерчĕк çинче: Отечественнăй асла вăрçă инваличĕ **В. А. Еремеев** юлташ. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн ăна правительство «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа, «За боевые заслуги» тата «За отвагу» медальсемпе наградăланă. Фронтран аманса таврăннă хыççăн В. Еремеев юлташа яланах кая юлса пынă «Звезда» колхозра председатель пулса ĕçлеме суйланă. «Звезда» колхоз Еремеев юлташ ертсе пыма тытăннăранпа малти вырăна тухрĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ирттерсе тултарнă. Тĕштырăсене сентябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнчех вырса пĕтернĕ. Государствăна тырă памалли плана тултарнă.

Кĕрхи сĕртме планне тултарассишĕн

СĔРПӲ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕçсен планне 106 процент, комбайнсемпе тырă вырса пухмалли плана 101 процент ытла тултарчĕ. Халĕ трактористкăсем тата авăн çапнă çĕрте молотилкăсемпе ĕçлекен машинистсем хăйсен планĕсене тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Машинист А. Яковлев юлташ паянхи кун тĕлне 400 тонна ытларах çапса хăйĕн планне тултарчĕ.

Сĕртме тăвассипе МТС хăйĕн планне тултарайман-ха. План тăрăх пирĕн 1800 гектар сухаламалла пулсан, халĕ пурĕ те 1436 гектар кăна сухаланă. 3-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Иванов юлташ) 160 гектар вырăнне 250 гектар сухаланă. Степанов юлташ ертсе пыракан 10-мĕш трактор бригади те сĕртме тумалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Трактористсем В. Егоров, А. Александров, А. Тимофеева, К. Андреева юлташсем те сĕртме тумалли плана ирттерсе тултарчĕç. Сĕртме тăвасси ытти бригадăсенче те ăнăçлă пырать, паян-ыран сĕртме тумалли плана тултаратпăр.

В. КЛЕМЕНТЬЕВА, МТС старши агрономĕ.

ВĂКĂРСЕМПЕ УСĂ КУРАÇÇĔ

Етĕрне районĕнчи Ирçери «Комбайн» колхозра ялхуçалăх ĕçĕнче вăкăрсемпе усă кураççĕ. Вăкăрсемпе кĕлте турттараççĕ, сапнă тырра итемрен кĕлете тата Заготзернона турттараççĕ.

«Комсомол» колхозра молотилкăпа тырă çапнă çĕрте 2 вăкăрпа ĕçлеççĕ.

* * *

Ишлей районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕ 64 çухи Петр Филиппович Гайков юлташ хăйĕн вăкăрĕпе кĕлте турттарать. Кĕлте кӳме тытăннăранпа вăл 80 лав турттарнă.

Колхоз тыррине салатаççĕ

Комсомольски районри Урмел ял Советне виçĕ колхоз кĕрет. Вĕсем виççĕшĕ те ялхуçалăх ĕçĕнче питĕ юлса пыраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ĕç дисциплини пачах çук. Тырпул пухса кĕртес ĕçе кунта 130 çын ытла хутшăнмалла, анчах та ĕçе пурĕ те 40 — 50 çын кăна тухать. Çавна пула кунта тĕштырăсене çак вăхăта çитсе те вырса пĕтермен. Кĕлте кӳрес, авăн çапса государствăна тырă парас ĕç те юлса пырать. Колхоз бригадирĕсем М. Асриевпа М. Башкортова колхозниксем ĕçленĕ çĕрте те сайра-хутра çеç пулкалаççĕ. Колхозниксем тунă ĕçе çырса пымаççĕ. Колхоз председателĕ Г. Сатруков та хирте пулмасть. Бригадирсенчен тунă ĕçе те йышăнмасть, ĕçе тухман колхозниксене ответ тыттарас пирки нимĕн те тумасть.

Колхозра тырпула итемрен тарасапа турттарса кĕмеççĕ тата итемре нумай вăхăт вырттараççĕ. Колхоз счетоводĕ Т. Ямамеев тырра тĕрĕс учета илсе пымасть. Колхозниксене пурне те аванс шучĕпе тырă ала пустармасăрах парать.

Т. МЫШКИН.

Авăн çапнă çĕрте нормăна ытлашшипех тултараççĕ

Ишлей районĕнчи 13 колхоз государствăна тырă парса татнă. Вĕсен шутĕнче Сыпайкасси ял Советĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхоз та пур. Çак колхозăн председателĕ Ф. Зайцев юлташ авăн çапас ĕçе лайăх организациленĕ. Кунта кăнтăрла кăна мар, çĕрле те авăн çапаççĕ, авăн çапнă çĕрте пурте нормăна ирттерсе тултараççĕ. Машинист Н. Белов юлташ хăйĕн смининче 30 центнер вырăнне кашни кунах 40—50 центнер тырă çапать. 2-мĕш бригадăри машинист 62 çулти Ф. Палкин юлташ вара Беловран та лайăхрах ĕçлет, вăл кунне 60—70 центнер çапать. Кунта вăйя упрас шутпа пĕр приводпа икĕ молотилкăна ĕçлеттереççĕ. Çапнă тырра çийĕнчех триерпа алласа сушилкăра типĕтеççĕ. Колхозăн сушилкинче кунне 100 пăта яхăн тырă типет. Тырра тасатассине тата типĕтессине Хĕрлĕ Çартан таврăннă Ф. Колесников юлташ йĕркелесе пырать. Халĕ колхозра çĕрулми кăларса государствăна параççĕ. Колхоз çĕрулми памалли графика пурнăçласа пырать. Кашни кунах 4 лашапа кĕрхи сĕртме тăваççĕ. Сĕртме пахалăхĕ те лайăх:

Н. КОНДАКОВ.

ĔÇШĔН ХУШСА ТӲЛЕÇÇĔ

Элĕк районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра А. Е. Егорова юлташ виçĕ çул ытла колхоз сыснисене пăхать. Хăйне шанса панă ĕçе вăл юратса тĕплĕн тăвать. Сыснасене тăрантарасси тата пăхасси çинчен зоотехниксемпе канашлать, тĕрлĕ чиртен мĕнле сыхланмалли çинчен ветеринарсенчен ыйтса пĕлет. Зоотехниксемпе ветеринарсем туса панă правилăсене яланах пурнăçласа пырать.

Тăрăшса ĕçленине пула 1945 çулта хăй çумне çирĕплетсе панă 6 сысна аминчен Егорова юлташ 102 çурă илсе вĕсене пĕтĕмпех лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Сысна çури планран ирттерсе пăхса илнĕшĕн колхоз правленийĕ Егорова юлташа ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 4 сысна çури панă.

Егорова юлташ малашне те тăрăшса ĕçлесе 1946 çулта кашни сысна аминчен 20 çурă пăхса çитĕнтерме пулнă.

В. ИГНАТЬЕВ.

Вăрлăхлăх пахчаçимĕç хывасси тата ăна пăхса усрасси

Пирĕн республикăри чылай колхозсенче вăрлăхлăх хăварнă пахчаçимĕçĕн чылай пысăк пайĕ, ăна хывма ятарласа тунă овощехранилищесем çук пирки, çĕрĕлсе пĕтет тата хăйĕн пахалăхне çухатать. Овощехранилищесене кирлĕ пек туманнине пула унти сывлăшăн температурине сăнаса тăма май çук. Вăрлăхлăх пахчаçимĕç лайăх хĕл каçасси ăна усрамалли вырăна пĕлсе тунинчен тата çав вырăнсене кирлĕ пек витнинчен килет.

Иртнĕ çулсенче çак йĕркене пурнăçласа пыманнине пула, вăрлăхлăх пахчаçимĕç чылай сая кайса пĕтрĕ.

Красноармейски районри «Сталь» колхозра вăрлăхлăх пахчаçимĕçе траншейăна (тăрăхла шăтăка) хывнă пулнă. Çак траншейăна вĕсем 15.000 турнепс хывнă. Турнепса шăтăка хывиччен сивĕ тивнине пула, вăл пĕтĕмпех çĕрсе пĕтнĕ. Калинино районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул вăрлăхлăх хăварнă кишĕре кая юлса кăларнă. Çавна пула кунта вара 45.000 вăрлăхлăх кишĕр çĕрсе кайнă. Колхоз руководителĕсемпе районри çĕрĕç пайĕн работникĕсем вăрлăхлăх пахчаçимĕç хывса хăварасси тата ăна пăхса усрасси çине çиелтен пăхнине пула, Калинино районĕ пахчаçимĕç вăрлăхĕ туса илмелли плана нумай тултараймарĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи нумай колхозсем вăрлăхлăх кишĕре тата чĕкĕнтĕре (кăшмана) кашни çулах траншейăсене хурса лайăх сыхласа хăвараççĕ. Траншейăсенче усрани питĕ йӳне ларать тата колхозсемшĕн те усăллă.

Вăрлăхлăх пахчаçимĕç усрама траншея хатĕрленĕ чухне траншея валли тивĕç вырăн суйласа илмелле. Çуркунне шыв пухăнса тăракан вырăнсем траншея тума пачах та юрăхсăр.

Траншейăн тăршшĕ—10 метр, сарлакăшĕ—1 метр тата тарăнăшĕ—0,8—1 метр пулсан аван. Çакăн пек траншейăсене пур тĕрлĕ тăпра çинче те тума юрать, ытла тăмлă вырăнта кăна юрăхлăх мар.

Вăрлăхлăх хăварнă купăстана подвал майлă вырăнсенче усрани лайăхрах. Купăста усрамалли вырăнта темпетуратура 0—1 градус, сывлăш нӳрлĕхĕ вăтам пулмалла. Хранилищери сывлăшăн ăшăлăхĕ е нӳрлĕхĕ ытларах пулсан, унта хунă çимĕç кăвакарать е кăмпаланма тытăнать, унтан вара çĕрме те пуçлать. Пирĕн республикăра тăвакан «Слава», «Номер первый — а», «Брауншвейгская» сортлă купăстасене кучанĕпех сӳлĕксем çине хурса усрамалла, е тӳрех çĕре хурса усрас тесен, тымарĕсене шалалла туса 3—4 рет хумалла, унăн çӳллĕшне 75 сантиметра çити тума юрать. Айлă-çиллĕ купаланă чухне хушшисене çапă хурас пулать.

Вăрлăхлăх тымарçимĕçе те купăстана усранă пекех усрамалла. Ретсем хушшине нӳрĕ тăпра е типĕ хăйăр хумалла. Шăтăкăн тăрринче 10—15 сантиметр пушă хăвармалла. Пушă шăтăк çине 20—25 сантиметр хулăмĕш тăпра купаламалла. Сивĕсем пуçлансанах шăтăка лайăх витес пулать. Тымарçимĕç кăшт шăнсан та çĕрме пултарать. Вăрлăхлăх хăварнă çимĕç шăнса ан пăсăлтăр тесен, шăтăкăн тарăнăшĕ 1 метртан кая пулмалла мар. Шăтăк çине 30—40 сантиметр улăм, ун çине 25—30 сантиметр тăпра хурса витсен аван. Хĕлле шăнса ан пăсăлтăр тесен, çиелтен типĕ тислĕк витсен лайăхрах пулать. Шăтăка витнĕ хыççăн шăтăк тавра канав алтас пулать.

Овощехранилищесенче вăрлăхлăх кишĕре тата çарăка шаршанласа хумалла, йĕркепе-йĕрке хушшине хăйăр хумалла, чĕкĕнтĕре (кăшмана) пӳлмесенче усрамалла. Пӳлмен çӳллĕшĕ 1,25 метртан ытла пулмалла мар. Вăрлăхлăх чĕкĕнтĕре шăтăка хума та юрать. Ун пек шăтăксем лупас айĕнче е çине витнĕ хуралтă айĕнче пулсан лайăхрах. Шăтăкăн тарăнăшĕ 2,5 метр, диаметрĕ 3—3.5 метр пулмалла. Шăтăка çиелтен хăмапа витмелле, ун çине 30—40 сантиметр улăм хумалла. Сивĕ вăхăтра улăм çине тислĕк е тăпра витмелле.

Кашни колхозăн хăйне валли кăна мар, государствăна сутмалăх та пахчаçимĕç вăрлăхĕ туса илмелле. Çавăнпа та вăрлăхлăх хăваракан пахчаçимĕçе лайăх хĕл каçарма тăрăшмалла.

А. КУЗНЕЦОВА.

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ МУСКАВА ТАВРĂННИ

Октябрĕн 4-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Лондонран Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сессийĕ пĕтнĕ хыççăн Мускава таврăннă.

ВКП(б) ОБКОМĔНЧЕ

1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче предприятисем хĕле мĕнле хатĕрленнине пăхса тухаççĕ

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, промышленность предприятийĕсене, чугун çул транспортне, электростанцисене, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй хуçалăха хĕле хатĕрлесе çитерес ыйтăва сӳтсе явса, çак ĕç пачах та çителĕксĕр пынине палăртнă. Нумай предприятисемпе электростанцисем (Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсем, Шупашкарти электростанци тата ытти те) энергетика оборудованине, производство çурчĕсене тата пурăнмалли çуртйĕре юсаса пĕтермен, производство нушисем валли чĕртаварпа топливо запасĕсем туса хуман, ĕçлемелли çуртсене, хваттерсемпе общежитисене япăх хутса ăшăтаççĕ, пурăнмалли çĕнĕ çуртсем тумалли тата производствăн çĕнĕ хăвачĕсене ĕçе ямалли плана пурнăça кĕртмен. Чăваш АССР Наркомхозĕ тата хуласенчи коммунальнăй хуçалăх отделĕсем пурăнмалли çуртсене, гостиницăсемпе мунчасене тĕпрен юсамалли плана пурнăça кĕртмен, мунчасемпе гостиницăсене валли вутă запасĕ хатĕрлесе хуман. Чугун çул транспортĕнчи предприятисем паровоз паркне юсаса ăшă тытмалла туман, чугун çулсене тивĕçлĕ йĕркене кĕртмен.

Обком бюровĕ çакна палăртнă: предприятисен руководителĕсем, парти тата профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисем валли производствăра ĕçлеме тата пурăнма йĕркеллĕ май туса парас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем, хула совет исполкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем хĕле хатĕрленес ĕç мĕнле пынине япăх контроллесе тăраççĕ, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене çак ĕçре кирлĕ пулăшу памаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хуçалăх тата парти организацийĕсен руководителĕсене кашни предприятие хĕле кăтартуллăн хатĕрлесе çитерес ĕçе мĕнпур вăйсемпе майсене халех мобилизацилеме хушнă.

Обком бюровĕ промышленность предприятийĕсем, чугун çул транспорчĕ, электростанцисем, пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй учрежденисемпе культура учрежденийĕсем хĕле мĕнле хатĕрленсе çитнине кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче общество енчен пăхса тухма йышăннă.

Предприятисенче çав ĕçе туса ирттерме комиссисем суйламалла, комиссисене рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен представителĕсене анлăн явăçтарас пулать.

Кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен çак мероприятисене пурнăça кĕртмелле:

а) производствăпа служба çурчĕсене, пурăнмалли çуртйĕре, çавăн пекех тата мĕнпур паровозсен паркне юсаса ăшă тытмалла тăвас пулать;

б) пурăнмалли çĕнĕ çуртсене туса çитерес пулать;

в) производство валли тата рабочисемпе служащисем валли чĕртаварпа топливо хатĕрлесе хурас пулать;

г) энергетика оборудованине хĕллехи вăхăтра ĕçлеме пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерес пулать;

д) предприятисем çумĕнчи ОРС-семпе подсобнăй хуçалăхсене хĕле хатĕрлесе çитерес пулать;

е) рабочисемпе служащисем валли пурăнмалли йĕркеллĕ условисем туса парас пулать.

Хĕле хатĕрленнине общество енчен пăхса тухас ĕçе партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсем активлăн хутшăнма тивĕçлĕ. Массăллă-политикăллă ĕçе сарса ярса, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй учрежденисене юсанă çĕре ĕçсыннисене, рабочисемпе служащисене анлăн явăçтармалла.

Кашни юсанă çурта е культурăпа пăла учрежденине парти горкомĕсемпе райкомĕсен, горсовет исполкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, профсоюзсемпе хуçалăх организацийĕсен представителĕсенчен тăракан комиссисем пăхса тухса йышăнмалла.

Обком бюровĕ республикăри, районсенчи, заводсенчи хаçатсен редакторĕсене тата радиокомитета предприятисем хĕле хатĕрленнине общество енчен пăхса тухас ĕç мĕнле пынине хаçатсенче тата радио тăрăх анлăн çутатса пыма хушнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ рабочисене, инженерсемпе техниксене, служащисене, хăйсен предприятийĕсене хĕллехи вăхăтра пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тăвас, производство заданийĕсене ăнăçлăн тултарса пымалла тăвас шутпа, хĕле кăтартуллă хатĕрлеме чĕнет.

Н. И. Ашмарин

(Çуралнăранпа 75 çул тултарнă май)

Николай Иванович Ашмарин—чăваш чĕлхине 40 çул хушши тĕпчесе пурăннă учепăй. Вăл хăй вырăс пулнă, анчах та чăвашла питĕ лайăх пĕлнĕ.

Вăл чăваш чĕлхине нумай енчен тĕпченĕ: сăмахсен пĕлтерĕшĕсем енчен те, сăмахсенчи сасăсем енчен те, сăмах улшăнăвĕсем енчен те, сăмахсен предложенири çыхăнăвĕсем енчен те, тĕрлĕ çĕрти калаçусем енчен те, истори енчен те. Тĕпчессе вăл чăваш чĕлхине хăй умĕн ĕçленĕ ученăйсенчен нумай тарăнрах тĕпченĕ тата чĕлхери сăмахсене вăл уйрăм илсе çеç мар, пĕтĕм чĕлхе пуянлăхĕпе çыхăнтарса, чăваш халăхĕн литературипе, фольклорĕпе. пурнăçри йăлисемпе çыхăнтарса тĕпченĕ.

Н. И. Ашмарин, пуринчен ытла, патша саманинче, патша влаçĕ вак халăхсен «культурине пусарас, чĕлхине хĕсĕрлес, хăйсене тĕттĕмре усрас» политикăна тытса пынă йывăр вăхăтра ĕçленĕ. Çав условисенче чăваш чĕлхине тĕпчесе, ун çинчен кĕнекесем çырса, вăл пысăк ĕç тунă, чăвашсен литература чĕлхине аталантарма, чăваш культурине хăпартма пулăшнă. Революци хыççăн вăл, чăваш чĕлхине малалла тĕпчесе, пысăк словарь пичетлесе кăларса тата чăваш шкулĕсем валли учительсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе хутшăнса, шкулсенче чăваш чĕлхине тата чăвашла вĕрентес ĕçе çăмăллатнă, литература чĕлхине пуянлатма, формипе нациллĕ, ăшчиккипе социализмлă культурăна аталантарма пулăшнă.

Ученăйсем ăна пысăка хурса хакласçĕ. И. И. Мещанинов академик ун çинчен çапла çырать: «Н. И. Ашмарин профессора наука çыннисем пысăк тюрколог тесе шутласçĕ... Унăн Совет Союзĕнчи тюрк чĕлхисене тĕпчесе çырнă кĕнекисене пысăк вырăна хурасçĕ. Çак тĕлĕшпе Н. И. Ашмарин ячĕ пĕтĕм тĕнчери литературăна кĕрсе юлчĕ, унăн паха ĕçĕсене халь тав туса асăнасçĕ», тет. 1929 çулта Н. И. Ашмарина СССР Наука академийĕн член-корреспондентне суйланă. Чăваш халăхĕпе Чăваш республикин правительстви ăна яланах пулăшса тăнă. Икĕ хутчен ăна Чăваш АССР-ĕн Тĕпĕçтăвкомне члена суйланă.

Николай Иванович Ашмарин 1870 çулта октябрĕн 5-мĕшĕнче Етĕрне хулинче çуралнă. Курмыш хулинчи кĕçĕн шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Чулхулари (Горькири) гимназире вĕреннĕ; унтан вĕренсе тухсан, Мускава кайса, Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен чĕлхисене вĕрентекен Лазаревски институтта кĕнĕ, çав институтран вара 1894 çулта 1-мĕш степень дипломпа вĕренсе тухнă.

1895 çулта Хусанти Тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне ĕçлеме кĕнĕ (унта вăл вырăс чĕлхине вĕрентнĕ). 1900 çултан пуçласа 1917 çулччченех вара Хусанти Учительсен семинаринче вĕрентсе пурăннă. Унта вăл малтан историпе вырăс чĕлхине, кайран—географие вĕрентнĕ.

1917 çултан пуçласа 1920 çулхи кĕркуннеччен Хусанти Археологипе историн Çурçĕр-Хĕвелтухăç институтĕнче тутар чĕлхипе чăваш чĕлхине вĕрентнĕ. 1919 çултан вара вăл хăй ĕçленĕ пур аслă шкулсенче те профессор пулса вĕрентнĕ; 1920 çултан пуçласа 1923 çулхи кĕркуннеччен Чĕмпĕрти (хальхи Ульяновск) Чăвашсен педагогика институтĕнче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ: 1923 çултан пуçласа 1926 çулхи кĕркуннеччен Бакури государство университетĕнче тюрк чĕлхисене вĕрентнĕ, çав университетра ăна тюркологи докторĕ ятне панă; 1926 çултан пуçласа мĕн вилличчченех (1933 çулччен) Хусанти Хĕвелтухăçĕнчи педагогика институчĕн Чăваш отделенийĕнче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ.

Н. И. Ашмарин чăваш, тутар, турок, азербайджан, араб, перс, мари, удмурт, венгер, латин, нимĕç, француз чĕлхисене пĕлнĕ.

Чăваш чĕлхине вĕренсе тĕпчесси унăн çапла пуçланса кайнă. Гимназире вĕреннĕ чухне унăн çав гимназирех вĕреннĕ пичĕшĕ Хусантан А. Добролюбован «Ознакомление с фонетикой и формами чувашского языка посредством разбора и перевода оригинальных чувашских статей» ятлă кĕнекине, 1879 çулта пичетленсе тухнăскерне, ыйтса илнĕ. Çав кĕнекепе паллашсан, Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхине питĕ интересленсе кайнă. «Чăваш чĕлхинчи сăмахсем йăлтах урăхла çыхăнса тăнă пирки ăна вĕренме хĕн пулчĕ, —тесе çырать вăл хăйĕн автобиографийĕнче.—Унта эпĕ хам унччен вĕреннĕ чĕлхесенчен урăхларах япаласене куртăм. Эпĕ çав ăнланмалла мар кĕнекене вулама темиçе хут та пăрахрăм, анчах та ăна ăнланса илесех-ха тесе, каллех алла тытаттăм». Çапла вара 13 çулхи ача чăваш чĕлхине вĕренсе тĕпчес ĕçе хăйĕн тĕп ĕçĕ вырăнне суйласа илнĕ.

Мускаври Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен чĕлхисене вĕрентекен институтăн пĕрремĕш курсĕнче вĕреннĕ чухне вăл «Очерк народной поэзии у чуваш» ятлă статья çырнă, вăл статья «Этнографическое обозрение» ятлă журналта пичетленнĕ. Çав статья ĕнтĕ Н. И. Ашмаринăн чăвашсем çинчен çырнă пĕрремĕш статьи пулса тăрать. Унта вăл чăваш юррисен уйрăмлăхне, вĕсенче мĕн-мĕн çинчен каланине, сăмахĕсем мĕнле шăрçаланса тăнине кăтартса парать.

Институтăн юлашки курсĕнче вăл чăваш чĕлхин грамматикине çырма пуçланă. 1898 çулта вара ăна, «Материалы для исследования чувашского языка» тесе ят парса, Хусанти университетăн «ученăй записнкинче» пичетлесе кăларнă, уйрăм кĕнеке те туса кăларнă. Çак кĕнеке Н. И. Ашмаринăн чăваш чĕлхи çинчен çырнă пĕрремĕш кĕнеки пулса тăрать. Унта вăл чăваш чĕлхине ытти чĕлхесемпе танлаштарса парать, чăваш чĕлхин фонетикипе морфологине тĕплĕн ăнлантарса парать тата хăшпĕр вырăнсенчи калаçусене кăтартса парать. Çак кĕнекере Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхине унччен пичетленсе тухнă пур кĕнекесенчен те анлăрах, тĕплĕрех, тарăнтарах çутатса панă, чăваш сăмахĕсене ытти ученăйсенчен нумай тĕрĕсрех çырса кăтартнă.

1903 çулта Н. И. Ашмаринăн тепĕр пысăк та паха кĕнеки—«Опыт исследования чувашского синтаксиса» ятлă кĕнекин 1-мĕш пайĕ пичетленсе тухнă, çав кĕнекен 2-мĕш пайĕ вара 1923 çулта тин пичетленнĕ. Вăл вăхăтра çавăн пек синтаксис Российăн хĕвелтухăç пайĕнче пурăнакан халăхсен пĕрин те пулман. Çав синтаксис чăваш чĕлхин пĕрремĕш синтаксисĕ пулса тăрать. Чăваш чĕлхин синтаксисне наука енчен тĕпчес тĕлĕшпе унччен никам та ĕçлемен, Ашмарин вăхăтĕнче те революциччен чăваш синтаксисне çавăн пек тĕпчекен пулман. Çав синтаксис хальхи вăхăтра та хăйĕн пахалăхне çухатман.

Н. И. Ашмарин тата чăваш чĕлхинчи звукоподражательнăй текен сăмахсене нумай тĕпченĕ. Çак ыйтупа çырнă тĕп кĕнеки унăн «Морфологическая категория подражаний в чувашском языке» ятлă, вăл 1928 çулта Шупашкарта пичетленсе тухнă. Ку тĕлĕшпе те чăваш чĕлхине Ашмаринсăр пуçне урăх никам та тĕпчемен. Ашмарин чĕлхесем çавăн йышши сăмахсенчен пулса кайнă тесе вĕрентни, паллах ĕнтĕ, йăнăш. Анчах та çавăн йышши сăмахсем пирĕн мĕнлисем пурри çинчен, вĕсем мĕнле йĕркеленсе тăни çинчен вĕрентни халĕ те хăйĕн хакне çухатман.

Н. И. Ашмаринăн чи паха ĕçĕсенчен пĕри вăл—«Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» (словарьне) çырса хатĕрлени пулать. Халиччен çав словарĕн 16-томĕ пичетленсе тухнă. 17-мĕшне (юлашкине) пичетлеме хатĕрленĕ. Çав 17 томра Ашмарин чăваш чĕлхинчи 40.000 сăмаха ытла пухса çырса хунă, кунсăр пуçне унта сăмахсен 5—6 пин варианчĕ пур, темиçе сăмахпа калакан терминсем, идиомсем тата ытти сăмах майлашăвĕсем 10.000 яхăн пур. Сăмахсене сасăсем енчен питĕ тĕрĕс çырса хунă, вĕсен пĕлтерĕшĕсене тĕплĕн ăнлантарса панă. примерсем калама çук нумай илсе кăтартнă. Çав словарь этнографипе фольклор материалĕсемпе питĕ пуян. Совет Союзĕн хĕвелтухăç енчи ытти халăхсен ун пек словарь пĕр якутсен кăна пур (Э. Пекарский çырнă 13 томлă словарь) тата В. Радлов çырнă «Опыт словаря тюркских языков» ятлă 4 томлă словаре çеç Н. И. Ашмарин словарĕпе танлаштарма юрать.

Паллах ĕнтĕ, словарĕн тĕп пайĕ революччен çырса хатĕрленĕ пирки, унта хальхи вăхăтри сăмахсем (интернационаллă сăмахсем, çĕнĕ сăмахсем) нумайĕшĕ çук. примерсем хушшинче пурнăçа тĕрĕс кăтартман предложенисем те пур. Словарьпе усă кураканăн çавăн пек предложенисене тишкерсе пăхас пулать. Ученăйсем пурте вăл словаре питĕ хакла хурасçĕ. чăваш чĕлхине вĕреннĕ е тĕпленĕ чухне çав словарьпе усă курасçĕ.

Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхин историйĕ пирки те çырнă. Вăл 1902 çулта «Болгары и чуваши» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унта вăл чăваш чĕлхи пăлхар чĕлхи пулнине кăтартса парать.

Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхи çинчен çырнин пĕр пайĕ халь кивелнĕ. Анчах вăл çырнин пысăк пайĕ хăйĕн пахалăхне халĕ те çухатман. Пирĕн хальхи чĕлхе тĕпчевçисен. Марр вĕрентĕвĕпе усă курса, чăваш чĕлхине тата тĕплĕрех тĕпчеме тăрăшмалла. Çакăн пирки Ашмарин хăех çапла çырнă: «Çĕнĕ работниксем кирлĕ, çав работниксен чăваш чĕлхин фонетикине, морфологине, диалекчĕсене, диалектсен географине тĕпчес тĕлĕшпе тунă ситĕнÿсене тарăнлатмалла çеç мар, вĕсен чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçре çĕнĕ çулсем шырамалла», тенĕ.

Социализм строительствинче чĕлхе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. «Чĕлхе тасалăхĕшĕн, шухăша тĕрĕс палăртассишĕн, чĕлхе çивĕчлĕхĕшĕн кĕрешни — культура орудийĕшĕн кĕрешни пулса тăрать, — тесе çырнă М. Горький.—Çав оруди мĕн чухлĕ çивĕчрех, мĕн чухлĕ меллĕрех çапать, çавăн чухлĕ вăл çĕнтерÿллĕрех пулать».

Çавăнпа та ĕнтĕ чĕлхене лайăхрах вĕренес пулать, шухăша тĕрĕсрех каласа паракан витĕмлĕрех сăмахсене суйласа илме пĕлес пулать. Çак тĕлĕшпе писательсене, пичет работникĕсене, агитаторсене тата ыттисене те Ашмарин çырнă кĕнекесем, пуринчен ытла унăн словарĕ, нумай пулăшма тивĕçлĕ.

А. ИВАНОВ.

Отпускпа усă курманшăн перекет кассине хывнă укçана тÿлеме тĕплĕн хатĕрленĕр!

Сталинла Конституци тăрăх, ĕççыннисен кану прави пур. Мирлĕ вăхăтра çак правăпа ĕççыннисем туллин усă курнă. Рабочисемпе служащисене отпуск вăхăтĕнчи ĕç укçине пĕтĕмпех парса пыни вĕсен кану вăхăтне лайăхлатма май панă. Кунсăр пуçне, ĕççыннисем валли çĕршывра темĕн чухлĕ курортсемпе санаторисем, кану çурчĕсем ĕçленĕ. Çĕршер пин совет гражданĕсем çулсеренех Тăван çĕршывăн чи лайăх курорчĕсенче канса хăйсен сывлăхне çирĕплетнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн пĕтĕм вăйне ирсĕр тăшмана хирĕç кĕрешĕве мобилизацилерĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1941 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче каларнă Указĕ тăрăх, рабочисемпе служащисене вăрçă вăхăтĕнче черетлĕ отпуск парассине пăрахăçа кăларса отпускшăн укçа çеç тÿлемелле тунă. Отпускпа усă курманшăн илмелли укçана алла паман, ăна перекет кĕнеки çине çырса перекет кассине хывнă.

1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа рабочисемпе служащисене черетлĕ отпуск памалла тунă. отпускшăн тÿлемелли укçана перекет кассине хывма чарнă. 1945 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕ отпускшăн перекет кассине хывнă укçана рабочисемпе служащисене мĕнле тата хăçан тавăрса памалли çинчен уйрăм решени йышăннă. Çак решени тăрăх, 100 тенкĕрен сахалтарах вкладсене (кунта 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен хутшăннă процент та кĕрет) 1945 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕмĕшпе каялла тавăрса памалла. 100 тенкĕрен ытларах вкладсене 4 çул хушшинче кашни çулах пĕр тан пайсемпе тавăрса памалла.

Отпускпа усă курманшăн перекет кассине хывнă вкладсене тавăрса пама «уйрăм вклад свидетельстви» ятлă документ парасçĕ. Çав свидетельствăна тÿрех перекет кассинче, е предприятисемпе учрежденисенче, организацисенче 1945 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа илмелле. Свидетельствăна 1946 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен илеймесен, çав çынсем вара хăйсен вкладне илес правăна çухатасçĕ.

Свидетельствăсене 500, 200, 100, 50, 25 тенкĕлĕх кăларасçĕ. Рабочисемпе служащисене свидетельство панă чух 25 тенкĕрен каярах памалла пулсан, ăна укçан парасçĕ.

Свидетельствăсем тăрăх 4 çул хушши укçа тÿлесçĕ. Çавăнпа та свидетельство çинче кашни çул валли уйрăм талон пулать. Малтанхи талонпа 1946 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тÿлеме пуçласçĕ. Укçа илнĕ чух талонсене свидетельствăсемпе пĕрлех перекет кассине памалла. Свидетельство хуçийĕ ыйтнă тăрăх, çав талонсене перекет кассисем укçа вырăнне те йышăнма пултарасçĕ. Свидетельствăсем тăрăх 1951 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен укçа илме пулать. Çак вăхăт иртсен вара свидетельствăсем тăрăх тÿлеме пăрахасçĕ.

Финанс органĕсемпе перекет кассисен, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен хальхи вăхăтра ĕçрен тухса кайнă рабочисемпе служащисен перекет касси билечĕсене сыхласа усрассине йĕркелемелле. Мĕнпур предприятисемпе учрежденисенче тата организацисенче рабочисемпе служащисене памасăр юлнă перекет кассин билечĕсене мĕнле сыхласа усрани çинчен акт çырмалла. Перекет кассин билечĕсене свидетельствăсемпе улăштарма уйрăм план туса, ăна район е хула совет исполкомне çирĕплетме тăратмалла.

Перекет кассисенче вклад тăрăх 100 тенке çитиччен укçа илекенсем йышлăн пулсан, укçа тÿлессине йĕркеллĕ туса пырас тата черетсем пуласран сыхланас шутпа, рабочисемпе служащисене график тăрăх укçа тÿлемелле тăвас пулать. Графика е предприятисем, е счет номерĕсем, е алфавит тăрăх тума юрать.

А. МИХАЙЛОВ,
Чăваш АССР-чи перекет кассисемпе государство кредичĕн управлени начальникĕ.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче

ПАРИЖ, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн устав проектне хатĕрлекен комисси икĕ кун ĕçленĕ хыççăн октябрĕн 3-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине çав устава пăхса тухма тăратнă. Делегатсем пурте, пĕр кăмăллă пулса, устав проектне çирĕплетнĕ.

Устав проекчĕн хăшпĕр тĕлĕсене улăштарса, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн Исполнительнăй комитетĕнче пĕчĕк тата вăтам державăсен представителĕсен хисепне ÿстермелле тунă. Çапла вара. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн Исполнительнăй комитетĕнче 26 член пулать. Чи малтанхи проектра çав Исполнительнăй комитетра 17 çĕршывăн представителĕсем пулмалла тенĕччĕ, халĕ ĕнтĕ 22 çĕршывăн представителĕ пулать. Исполнительнăй комитета профсоюз организацийĕсен ĕçĕпе паллашма ирĕк панă. Хальхи конференципе ситес конференци хушшинчи вăхăтра Генеральнăй советпа Исполнительнăй комитета уставăн хăшпĕр пункчĕсене, кирлĕ пулсассăн, улăштарма чрезвычайнăй полномочи панă.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче ирхи ларура Кипр делегачĕ хăйсен çĕршывĕнче профсоюзсене хĕсни çинчен тарăхса пĕлтернĕ. Пирĕн çĕршывра,—тенĕ вăл,—Грецири пекех, пухусем тума чарасçĕ. Пирĕн сăмах ирĕклĕхĕ те, пичет ирĕклĕхĕ те, пуху ирĕклĕхĕ те çук. Ытти çĕршывсенче профсоюзсене панă ирĕклĕхе пире те пама ыйтатпăр эпир,—тесе пĕтернĕ хăйĕн сăмахне Кипр делегачĕ.

Югославии делегачĕ Салай çапла каланă: Югославири рабочи класс çак вăрçăри хăйĕн тивĕçлехне пĕтĕмĕшпе пурнăçа кĕртрĕ. Пирĕн çĕршыври киве йĕркене демократиллĕ йĕркепе улăштарнă, эпир çак демократиллĕ йĕркепе килĕштерсе ĕçлетпĕр. Пирĕн ĕç укçи пĕр пек тăрать, чакмасть, çавăн пекех куллен кирлĕ таварсен хакĕ те пĕр вырăнта тăрать, ÿсмест. Социальнăй обеспечени ĕçне хăйне уйрăм ведомство ертсе пырать. Рабочисен пурнăçĕ самаях лайăхланчĕ. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ пулăшса пырсан, Югославири рабочисен пурнăçĕ тата лайăхланĕ.

Кун хыççăн Чехословаки делегачĕ Клемент тухса каланă. Вăл Чехословакири экономика лару-тăрăвĕ çинчен каласа кăтартнă. Чехословаки профсоюзĕсем фашизма хирĕç тивĕçлипе кĕрешсçĕ, Чехословаки профсоюзĕсем хăйсен çĕршывĕнчи профсоюзсен юхăмĕн пĕрлĕхĕшĕн кĕрешессĕ, тенĕ вăл.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ КАЙМА СУЙЛАНĂ ИРАН ДЕЛЕГАЧĔСЕМ АПАТ ЙЫШĂНМАСÇĔ

ТЕГЕРАН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Иран влаçĕсем Иранри профсоюзсен Парижа Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине кайма суйланă делегачĕсене Шамидепе Рустава тытса хупнă. Çав делегатсем, Иран правительстви çавăн пек законсăр хăтланнине хирĕç тăрса, сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа апат йышăнма пăрахнă. Пĕлтернĕ тăрăх, Шамидĕ сывлăхĕ питĕ начарланса çитнĕ.

ФРАНЦИРИ КАНТОНСЕНЧИ СУЙЛАВСЕН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

ПАРИЖ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки кунсенче Францири кантонсенче пулса иртнĕ суйлавсен итогĕсене пичетлесе кăларнăччĕ. Суйлавсем мĕнле иртнине тата тĕрлĕ партисен вăйне лайăхрах палăртас тесен, çав итогсем çумне хушса калама тивет.

Францире кантонсенчи суйлавсем партисен вăйĕсене нихăçан та çителĕклĕ тĕрĕс кăтартса парайман, мĕншĕн тесен вăл суйлавсенче тĕрлĕ кантонсенчи халăхсен йышне кура суйламасçĕ: кантонсенчи суйлавçăсен хисепĕ питĕ тĕрлĕ — вăл темиçе çĕр çынтан пуçласа темиçе вунă пин çынна çитет. Сăмахран, Эн департаментĕнчи Сен-Кантэн кантонĕнче 33.191 суйлавçă шутланса тăрать, Кăнтăр Альп департаментĕнчи Алло кантонĕнче 396 суйлавçă çеç. Анчах иккĕшĕ те вĕсем пĕрер советник суйланă (малтанхи кантонра коммуниста суйланă, иккĕмĕшĕнче—христианла демократа). Кунсăр пуçне, департаментсен генеральнăй совечĕсем департаментсенчи префектсем çумĕнче канаш паракан органсем кăна пулса тăнă пирки, француз суйлавçисем вĕсене кирек хăçан та муниципалитетсене суйланинчен, уйрăмах та парламента суйланинчен нумай кая хунă. Ку хутĕнче те 25 миллион суйлавçăран кантонсенчи суйлавсене 15 миллион çын çеç хутшăннă. урăхла каласан, суйлавçăсен 40 процентне яхăн, пуринчен ытла пысăк хула центрĕсенче, суйлавсене хутшăнман. Парижпа çыпçăнса ларнă ялсенче тата Марсельре суйлавçăсен 30 процентĕ суйлава хутшăнман, ытти хуласенче унтан та ытларах çын хутшăнман, Ним хулинче 50.000 суйлавçăран 30.000 çынтан кăшт çеç ытларах суйлава хутшăннă. Суйлава хутшăнман çынсен хисепĕ çавăн пек пысăк пулни, пĕр енчен, малтан асăннă сăлтавран килет, тепĕр енчен, çу пĕтнĕ вăхăтра хулари халăхăн пĕр пайĕ апат-çимĕç шыраса ялсене саланнинчен, каникула кайнинчен тата ыттинчен те килет.

Кантонсенчи суйлавсенче коммунистсен партийĕшĕн пуринчен те ытларах çын сасăланă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, коммунистсен партийĕн кандидачĕсемшĕн 3.080.000 çын сасăланă. Ку шута Сена департаментĕнче коммунистсемшĕн сасăланă çынсен хисепĕ кĕмест, мĕншĕн тесен Сена департаментĕнче урăх йĕркепе суйланă (унта халăхсен йышне кура суйланă). «Юманите» хаçат çав цифрăсене йышăнман, вăл коммунистсемшĕн сасăланă çынсен шутне Сена департаментĕнче муниципалитет суйлавĕнче тата хальхи суйлавра коммунистсемшĕн сасăланă çынсен хисепне те кĕртмелле, тенĕ (мĕншĕн тесен Парижри муниципалитет советникĕсем çав вăхăтрах Сена департаментĕнчи генеральнăй советниксем пулса тăрасçĕ). Çапла шутласан, коммунистсен партийĕшĕн 3.830.646 çын сасăланă пулать.

Шалти ĕçсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, социалистсен партийĕн кандидачĕсемшĕн 3.423.673 çын сасăланă. Парижри Сена департаментĕнче уншăн сасăланă çынсен шутне кĕртсен—3.700.000 çынна яхăн сасăланă пулать. Радикалсен партийĕн кандидачĕсемшĕн 2.054.566 çын сасăланă.

Коммунистсемшĕн халăх йышлă пурăнакан департаментсенчи кантонсенче пуринчен ытларах çын сасăланă. Çавăн пирки ĕнтĕ суйланнă коммунистсен хисепĕ суйланнă социалистсемпе радикалсен хисепĕнчен пĕчĕкрех. Суйлавра коммунистсемпе пĕрле пулма килĕшмен социалистсемшĕн темиçе пысăк центрта çынсем ĕлĕкхинчен сахалтарах сасăланă, халь вĕсемшĕн сасăламан çынсем унта коммунистсемшĕн сасăланă; Марсельре, Тулузăра, Сент-Этьенра, Нимра, Гренобльте, Руанра, Гаврта, Нор департаментĕнче тата ыттисенче те коммунистсемшĕн муниципалитетсене суйланă чухнехинчен ытларах çын сасăланă.

Анчах социалистсемшĕн çурçĕрти департаментсенче ĕлĕкхи пекех нумай çын сасăланă, темиçе пысăк центрта çухатнă сасăсем вырăнне вĕсем пысăк мар хуласемпе ялсенче çĕнĕ сасăсем туяннă: Франци хаçачĕсем çырнă тăрăх, ĕлĕкрех радикалсемшĕн суйланă çынсен пĕр пайĕ тата умереннăй текен партисемшĕн сасăланă çынсен пĕчĕк пайĕ халь социалистсемшĕн сасăланă.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛĂН ОТЧЕЧĔ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Çар министерстви Эйзенхауэр генералăн отчетне пичетлесе кăларнă. Ку отчета Эйзенхауэр генерал августăн 20-мĕшĕнче алă пуснă пулнă. Отчетра Америкăн çар влаçĕсем Потсдамри конференци вăхăчĕ умĕн Германире мĕн тунине тĕплĕн кăтартса панă.

Отчетра Германие демилитаризацилес ыйтăва, çавăн пекех тата Германири политикăпа экономика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва кĕскен çутатса панă. Отчет тăрăх, Америкăн çар влаçĕсем Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене икĕ пая уйăрасçĕ: тыткăна лекнисем тата хĕçпăшалсăрлатнă çарсем. Вĕсенчен июлĕн 31-мĕшĕ тĕлне 2.046.575 çынна киле янă, 922.566 çынна урăх категорине куçарнă. Америка çарĕсен аллинче халĕ 1.803.000 çын тыткăнра пурăнать.

Докладра каланă тăрăх, гитлеровецсен тĕрлĕ организацийĕсемпе агентствисене саланса янă е пĕтерсе лартнă. Хальхи вăхăтра Америкăн çар влаçĕсем 80.000 çынна яхăн арестленĕ тата тыткăнри çар çыннисене 35.000 çынна яхăн тĕрмене хупнă. Кунсăр пуçне, активлă гитлеровецсене 70.000 çынна, арестлеме палăртнăскерсене, хăйсен вырăнĕсенчен кăларнă.

БАВАРИРЕ АМЕРИКА ВЛАÇĔСЕН СОВЕТНИКĔ ПУЛНĂ НИМĔÇЕ СУД ТУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Мюнхенри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Баварире Америка влаçĕсен советникĕ пулса ĕçленĕ Шульце ятлă нимĕçе çар сучĕ суд тунă. Вара ăна ултă çуллăх тĕрмене хупса лартмалла тунă. Ăна акă мĕншĕн айăпланă: хăй çинчен пĕлтерекен анкетăна çырнă чухне вăл хăйĕн ĕлĕкхи усал ĕçĕсем çинчен каламасăр пытарса хăварнă. боеприпассем вăрттăн усранă. çавăн пекех тата союзниксене çаратса пуйăп пурлăха вăрттăн тытса тăнă.

НОРВЕГИ УЧЕНĂЙĔ СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ÇАР МЕДИЦИНИ ÇИНЧЕН

ОСЛО, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ кунсенче Ослори Халăх çурчĕн залĕнче Норвегипе Совет Союзĕн обществи «Совет Союзĕнчи вăрçă вăхăтĕнчи медицинăпа санитари ĕçĕ» ятлă фотовыставка уçнă. Выставкăна уçнă чухне Норвегин медицина управленийĕн директорĕ Карл Эванг сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Совет Союзĕнчи медицина ситĕнĕвĕсене питĕ пысăк хак панă.

Юлашкинчен Эванг Норвегин çурçĕрти пайĕнче пулнă Хĕрлĕ Çар часĕсене тав тунă. «Вырăссем хăйсене кăтартуллăн тытса пурăнчĕç,—тенĕ Эванг. — Вĕсем норвежецсене мĕн пама пултарнине пурне те, час-часах хăйсене кирлĕ япаласене те парса тăчĕç».

Пур хаçатсенче те выставка уçни çинчен тата Эванг тухса калани çинчен пĕлтерÿсем пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех тата хаçатсенче октябрь уйăхĕнче Осло хулинчи чи лайăх залсенчен пĕринче «Мускав» ятлă фотовыставка уçăласси çинчен пĕлтернĕ.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ХАТĔРЛÿ КОМИССИЙĔН ĔÇ ТĂВАКАН КОМИТЕЧĔ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешнĕ нацисен Хатĕрлÿ комиссийĕн Ĕç тăвакан комитечĕ октябрĕн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларура Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ хăш хулара ĕçлесе тăрасси çинчен сÿтсе-явнă. Ку тĕлĕшпе темиçе тĕрлĕ шухăш та пулнă, вара юлашкинчен сасăлама икĕ сĕнÿ тăратнă:

1. Пĕр сĕнĕвĕ—Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче ĕçлесе тăмалла. Ку сĕнÿшĕн 9 çын сасăланă, 3 çын хирĕç пулнă, 2 çын сасăламан.

Унтан председатель Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ Европăра ĕçлесе тăмалла тесе панă сĕнĕве сасăланă. Ку сĕнÿшĕн 3 çын сасăланă, 7 çын хирĕç пулнă, 4 çын сасăламан.

ЛАВАЛЕ СУД ТУМА ПУÇЛАНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 4-мĕшĕнче Парижра Верховнăй суд Лавале суд тума пуçланă. Суд ларăвĕсем Петэна суд тунă залрах пулса иртесçĕ.

Ларăу пуçлансанах суд председателĕ Монжибо адвокатсен заявленине вулама панă. Адвокатсем хăйсене Лаваль хÿтĕлес ĕçрен хăтарма ыйтасçĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем çырнă тăрăх, Лаваль ĕçне следстви туса пĕтермен пулать. Генеральнăй прокурор Морнэ тăрăхса çапла калать: адвокатсем Лаваль пирки пухнă пур документсемпе те паллашма пултарнă, вăл документсемпе паллашма вĕсен вăхăт çителĕклех пулнă, анчах та адвокатсем тем пирки вăл документсемпе паллашман. Лаваль хăй те, темиçе хутчен сăмах илсе, çивĕччĕн каланă, вăл та суд ларăвне чарса следстви тума ыйтнă.

Кĕске вăхăт хушши канашланă хыççăн суд председателĕ Монжибо çапла пĕлтернĕ: суд адвокатсем ыйтнине те, Лаваль ыйтнине те йышăнмасть, тенĕ. Вара кун хыççăн суд айăпласа çырнă акта итлеме пуçланă.

БОЛГАРИ ПРОМЫШЛЕННИКĔСЕН СЪЕЗЧĔ

СОФИЯ, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинче Болгари промышленникĕсен союзĕн съезчĕ пулса иртнĕ. Ку союза Болгарин 7.359 промышленность предприятийĕн представителĕсем кĕресçĕ.

Съезд решени йышăннă. Решенире çапла каланă: Болгари промышленникĕсем Отечественнăй фронт правительствин экономика программине пĕтĕмĕшпе пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăйпа ĕçлеме пуласçĕ, тенĕ. Съезд промышленность таварĕсен хакне йÿнетес тĕлĕшпе правительство тунă ĕçсене ырланă. вăл тĕлĕшпе правительствăна яланах пулăшса тăма пулнă.

ФРАНЦИ ЭСКАДРИ САЙГОНА ПЫНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: октябрĕн 3-мĕшĕнче Франци эскадри Индо-Китайри Сайгон портне пынă. Эскадрăпа пĕр авианосец, 4 крейсер, пĕр контрминоносец, флот-сывлăш вăйĕсем тата 12 разведка катерĕ кĕрессĕ.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США-ра хальхи вăхăтра 450.000 çын забастовка тăвассĕ. Забастовка тăвакан 30.000 рабочи-нефтяниксен ыйтăвне татса парас ĕçе ĕç министрĕ хăй хутшăннă пулин те, нефтяниксем çапах забастовка тăвассĕ.

Тăватă штатра 90.000 горняк забастовка пуçласа янă. Вĕсем мастерсен профсоюзне пĕрлешме право пуррине йышăнтарасшăн пулса забастовка тунă, шахтăсен хуçисем çав правăна йышăнтарасшăн мар.

Нью-Йоркра 18.000 грузчик забастовка тунă. Телефон компанийĕсен 200.000 служащийĕ—коллективлă договор тумасан. забастовка тума пуçлатпăр,—тесе каланă.

Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Индиана штачĕн губернаторĕ. забастовка тăвакан рабочисене «Стандарт Ойл Компани оф Индиана» фирмăн пысăк нефть заводне никама ямасăр хуралласа тăма чарас тесе. вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хурассипе хăратнă.

ПОЛЬША ЮГОСЛАВИЕ ПАРНЕ ПАНĂ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио çапла пĕлтерет: Польша республикинчен Югославие 112 вагон çĕркăмрăкĕ ярассĕ. Тито маршал Польшăн Югославири посланникне Вендене тав туса çыру янă.

«Польша пире пулăшнăшăн, демократиллĕ çĕнĕ Югославие парне шучĕпе 112 вагон çĕркăмрăкĕ панăшăн эпĕ питĕ савăнатăп,—тенĕ çырура.—Польша хăй те фашистсем кÿнĕ сиене сапласа çитереймен вăхăтра Югославие çапла пулăшни вăл Югославипе туслăн пурăнма тăрăшнине кăтартать. Çав парнешĕн Польша халăхне тав тăватăп».

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Чăваш АССР-ĕн Госстрах Управленине çакăн пек работниксем кирлĕ: ревизорсем, старши инспекторсем, инспекторсем, техник-строитель, секретарь-машинистка тата статистик.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10, Управление Госстраха Чуваш АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—8-57, заместительĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-93, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00293 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Зак. № 2, ф. 6. 50 42 п. л. Тираж 16.000 экз